**Мăшăр тени мĕн тени**

Мăшăр тени мĕн тени, —
Çумра арçын пур тени.
Юратупа пĕрлешсе
Пĕр çăмхана явăнни,
Пĕрне-пĕри итлесе
Килĕштерсе пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени, —
Çумра хӳтлĕх пур тени.
Ĕшенсессĕн тайăнма
Юман вырăнне пулни,
Ăшшăн тытнă ытамра
Ачашланма май пурри.

Мăшăр тени мĕн тени, —
Çумра шанчăк пур тени.
Çирĕп сывлăхлă пулса
Ăрăва вăй-хал пани,
Çут пуласлăха курса
Хавасланса пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени, —

Çумра ырлăх пур тени.

Ватлăхра та киленсе

Пурнăçа хыт юратни.

Ачасене ӳстерсе

Пĕрле ĕмĕр вĕçлени.

*Кипеч, А. Мăшăр тени мĕн тени: [сăвă] / А. Кипеч // Тăван Атăл. – 2009. – № 11. – С. 151.*